Çакăн пек ĕнтĕ социализăмран коммунисăмăн çăлти фазине йĕрипен куçса пырасси мĕнле пулмалине кăтартса тăракан хăшпĕр тĕп паллăсем.

(Йулашки пулат).

Аш-какай хатĕрлев планне вăхăтра тултарар

ЕЛĔК. Районри чылай колхозсем 1938 çулхи аш-какай хатĕрлев планне тултарса çитерчĕç. Халĕ вăл колхозсем 1939 çулăн аш-какай пама тытăнчĕç. Ку вăхăта ситиччен 1939 çулăн Анаткасри Калинин ячĕпе тăракан колхоз 6,93 центнĕр, Испухан колхозĕ — 5 центнĕр, Хирлеп колхозĕ — 7,74 центнĕр, Хура Вар — 2 центнĕр, Ассакасси—4, Йăнтапа— 7,30, Чулкаç колхозĕ 4,46 центнĕр пама пултарнă. Ун пек колхозсем районра татах та пур.

Çапла пулин те районра аш-какай хатĕрлев планне тултарасси çителĕксĕр пулса пырат, государствăна аш-какай тăрăмăлăн çулталăк планне 86 процент çеç тултарнă. Уйрăмăнах ку ĕçре ĕнеличниксем кайа ăулса пыраççĕ, вĕсем плана 62,5 процент таран çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Çакă ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ районсене тата пĕтĕмĕшле, республикăра государствăна йăлхуçалăх продукгисем тăратасси кайа ăулни çине уйрăмăн кăтартса хăварнă хыççăн та, районра татăклă улшăну туманнине кăтартса парат.

Хăшпĕр йăлсоветсем район планнĕ тултарма чăрмантарса пыраççĕ. Ку вăхăта ситиччен плана Киле-шĕ йăлсовечĕ 73 процент, Писĕп—76, Мăн Выла — 76, Ураскилът — 70, Йăрхунъушкĕн — 74. Тăват йăлсовечĕ 77 процент çеç тултарнă. Киле-шĕ, Писĕп, Мăн Выла, Ураскилът йăлсовечĕсенче çак иртнĕ ăнăкунăхăра аш-какай хатĕрлев планне тултарас тĕлĕшпе пачах та ӳсĕм туман.

Етмен тата Вырăс Сурăм йăлсовечĕсенче ĕнеличниксем ĕнĕпе аш-какай хатĕрлев планне тултарасси чăтма çук сӳрĕк пырат. Вăл йăлсоветсенче ĕнеличниксем плана 36—48 процент çеç тултарнă.

Аш-какай хатĕрлев планне тултарас ĕç ăулашки вăхăтсенче калама та çук çителĕксĕр пулса пынăн сăлтавĕ мĕнпе-ха? Тӳрех калас пулать, районри хатĕрлев уполномочĕнăйĕн аппаратĕнче йăлсоветсем масăллă-йăнăтарулă ĕçе туса пыманнинче.

Çăвăнна пĕрлех хатĕрлев аппаратĕнчи работниксем аш-какай пама пыракан ĕçсăмсене кăмăллăн калаçмаççĕ. Аш-какай ваăнă йышăнакан выăхсене усрама çуртйĕрсем сахăлпилле, япат-симĕс çителĕклĕ хатĕрлеймеллине пама пынă выăхсене сăлтавсăрах бракласа кайăла тавăрса йăнисем те пулнă.

Епĕр тăваттăмĕш кварталăн ăулашки уйăхĕ çине кĕтĕмĕр. Районри хатĕрлев уполномочĕнăйĕн аппарачĕн, партине совет организацисен аш-какай хатĕрлев планне тултарса çитересшĕн боҫшевикла кĕрешмелле. Çавна тума массăл-йăлăнтарулă ĕçе анăн сарса йăнă кирлĕ.

Ф. Филиппăв.

Çуралакансен хисепĕ ӳсет

КУСЛАВККА. Аборт тума чарасси çинчен саккун тухнă хыççăн районра çуралакансен хисепĕ чылай ӳснĕ. 1936 çулта районра 1313

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Колхозри парторганизаци

Стрелецкри колхоз çумĕнчи (Йĕтĕрне р.) парторганизацийĕнче тăхăр коммунис тăрăççĕ. Отчотна суйлав пухăвĕнче коммуниссен парторгĕ ĕçне çителĕксĕр, тесе хак пана пулнă.

Отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн парторганизаци сочувствующийĕсемпе комсомолĕсем тата партире тăман активпа хушшинче ĕçлесе-сивне чылай лайăхлатнă. Сочувствующийсен группи тăвата çынтан тăрат. Парторганизаци сочувствующийсене пур майсемпе те партипе ĕçне хутшăнтарма тăрăшнă. Кашни сочувствующийпе партипе поручнисем пана. Вĕсем партин уçă пухăвĕсене çÿреççĕ. Парти историне вĕренеççĕ. Ку ĕçре вĕсене Ивухтана йулташ пулăшса пырат.

Парторганизаци çумĕнче вунă çынтан агитколлектив организацийленĕ. Козлов, Токсубайĕв, Ивухтана агитаторсем колхозниксене тĕнчери лару-тăру кăтартăвĕсене, партине правительства йышăнна решенисене хăçатсем тăрăх ăнлантарса параççĕ. Ку кăтусемпе колхозниксен пухăвĕсенче те час-часах докладсем, лекцисем туса параççĕ. Парторг агитатăрсемпе семинарсем иртерет, вĕсене ĕçре пулăшса тăрат.

Колхозăн хăйĕн радиоузĕл пур. Хаҫăхи вăхăтра 110 колхозника килĕсенче радио. Уйăхра икĕ хут кино кураççĕ. Колхозра çтена хăçачĕ тухса тăрат. Кунсăр пуçне драмкружок ĕçлет. 1938 çулта ку кружок 15 хут спектакль лартса пана.

Партире тăман активпа ĕçлени хăйĕн результатне пана. Отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн тăвата çынна партине илнĕ, пĕр çынна кандидатран парти членне кусăрнă.

Парторганизаци партилĕ-политикалă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пырат. Пайăнки куна Стрелецк йалĕ талăкăшпех коллективизацилеммĕ. Кăçал колхоз рабоирва ни малтан тырпулсене пухса кĕртнĕ, авăн çапса пĕтернĕ. Тырпул тухăçĕ тĕлĕшпе колхоз района малти вырăна йышăннă. Кăçал колхозниксем кашни ĕçкуне çине виçĕ килограм ытла тĕштыра тата çĕрулми, улăм чылай илеççĕ. Колхоз 460 гектар кĕрхи çĕртме туса хăварнă. Государствă умĕнчи обязательствисене вăхăтра тултарса пырат. Тыра, аш-какай, çĕрулми тахçанах парса тăнă. Финанс планне сруччен тултарнăшăн Йĕтĕрне райĕçтăвкомĕ йалсовета куçса çÿрекен йăлава панă тата уçăлна премиленĕ.

Парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Вăл общественăлă организацисене кирлĕ таран йĕртсе пымаст. Комсомол организацисене те çителĕклĕ пулăшман. Вахрамейĕн парторгăй колхоз производствинче ĕçлемест. Вăл виçĕ ĕçре: районри парти кабинечĕн пуçлăхĕ, районри парти вăрçалă тупăсăрсен совечĕн председателĕ, вăлах парторгĕ. Паллах, Вахрамейĕн йулташ виçĕ пысăк ĕçе йĕртсе пыма пултараймаст. ПСК(б)П райкомĕ темшĕн ку ĕçпе интересленмест. Отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн пуçламĕш парторганизацине райком инструкторĕ пырса курман-ха.

П. П.

ХАҪАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ ВЫРĂННЕ

Массăран уйăрăлнă хаçат

Пичетĕн вăйĕ—массăна куллен тачă сыхăну тытмаст. Ахаль мар ĕнте Сталин йулташ: пичет вăл партин ни сивĕч, ни вăйăл оружийĕ, тесе калаканă. Çав катартăна Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Ударник" хаçат редакцийĕ асра тытса ĕçлемест. Вăл масса ыйтăнне сахал пурнăçлать.

Акă, районта малта пыракан, Туππай Есмĕлĕнчи „Краснай Чăваша" тата Вăрманкассинчи „Культура" колхозсенчи колхозниксем Октябĕр революцин уйăвĕ умĕнхи амăртăва хутшăнса государствă умĕнчи обязательствисене татса районри колхозниксем патне „Ударник" хаçат урăл чĕнĕ çырчĕç. Анчах колхозниксен ĕмĕчĕ пурнăçа кĕмерĕ. „Ударник" хаçат редакторĕ Ăвов йулташ колхозниксем ыйтăва материала „набора тăтăмăр, ситес номĕрте кăларатпăр", тесе вăхăта иртерсе пачĕ.

Хаçата чылай ĕçăлкорсем çырса тăрăççĕ. Вĕсем редакцин пулăшу парасса кĕтеççĕ. „Крестьянскай газета" йăтăрăласа ĕçăлкорсене, çтена хаçат редакторĕсене тата редколлегин членĕсене вĕрентме заочнăй курс организацинленĕ. Вĕсем валăн кĕнекесем тата ытти пособисем йăрат. „Ударник" хаçат редакцийĕ çав кĕнекесене валерсе панипĕр пуçне урăх нимĕн те тумаст. Консультаци ĕçне пĕркелемест.

Редакци ытти ĕçăлкорсемне те тивĕçлĕ сыхăну тытмаст-ха, вĕсене йĕртсе, вĕрентсе пымаст. Çавăн пирки ĕнтĕ хăшпĕр ĕçăлкорсем хаçатран пăрăма тытăнаççĕ. Есмĕл йăлсовечĕ çумĕнчи финагент Сидйаков йулташ. Вăрманкассинчи колхоз председателĕ Журавльов йулташ, колхоз членĕ, комсомолĕц Кудрйашов йулташ тата Наратчакки участкинчи зоотехник Васильев йулташ хаçата йăлана çыраччĕç. Пайăнки куна вĕсем çырма пăрахрĕç, мĕншĕн тесен вĕсен материалĕсемпе хаçат редакцийĕ усă курмаст, ниҫĕлле ответ та памаст, мĕнле çырмалинне вĕрентмест.

Йулашки вăхăтра „Ударник" хаçат çтена хаçатĕнче ĕçлекенсене те йăпăх йĕртсе пырат. Районра чылай колхозсенче çтена хаçачĕсем çулталăк хушшинче пĕре те тухман.

Катартăна çитменлĕхсем редакцинче ĕçлекенсен хушшинче дисциплинă йăпăхăнчен килеççĕ. Редакцине пулăшу ыйтма пырсан час-часах унта ĕçлекенсем пĕр-пĕринпе харкашса кайринне курма пулат.

Хаҫăхи вăхăтра ПСК(б)П райкомĕ государствăна çĕрулми, укçатенкĕ тата ытти обязательствисене тултарас тĕлĕшпе вăлла ĕçлет, партин активне мобилизацилет. Анчах „Ударник" хаçат çав ĕçсем çинчен сахал çырат. Паллах, ку пысăк çитменлĕх пулат, хаçат пурнăçран йăлинне пĕлтерет.

Пирĕн йулашкинчен çакна калас килет. Хаçатăн йăланах ПСК(б)П райкомĕне тачăрах сыхăнса тăмала. Йăлкорсене куллен йĕртсе пырса, вĕсене боҫшевисăмпа хĕçпăллантарасси тата хаçат ĕçне нумайтарах рабочисене, колхозниксене, интеллигенцине хутшăнтарасси хаçатăн чи пысăк ĕçĕ пулса тăрат.

Ст. Журавльов.

Вулав çурчĕ массăна пĕрле

Шетмĕпуçĕнчи (Ишлей р.) вулав çурчĕ колхозăла йăлăн интеллигенцийĕне тата йăлти мĕн пур массăна тачăн сыхăнса ĕçлет.

Вулав çурчĕ çумĕнче актив пур. Активсем массă хушшинче ăнлантару ĕçне туса пыраççĕ. Халĕ 1939 çулта пулăкан Пĕтĕм Союзри халăх переписĕн задачисем çинчен халăха каласа ăнлантараççĕ.

Пушă вăхăта савăнăçла, куҫ-турăлă иртерес тĕлĕшне вулав çурчĕ çумĕнчи драмкружок-на шавлă оркестр чылай анăçлăн ĕçлеççĕ. Драмкружок кăçал 8 хутчен спектакль лартса пачĕ.

Анчах та кунта пĕр çитменлĕх пур. Вулав çуртĕнчи библиотекăра кирлĕ кĕнекесем сахалтарах. Уйăрăнăнах Ленинпа Сталин произведенийĕсене тупса вулама хĕн. Йăлта „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" вĕренес тенкисем кулленех ӳссе пыраççĕ. Паллах ĕнтĕ, партин историне вĕренекен Ленинпа Сталинăн произведенийĕсене чи малтанах вулав çуртĕнчен тупса вулама ĕмĕтленет.

Вулав çурчĕн пуçлăхĕ К. Йĕвдокимăн-комсомолец. Вăл кунта виçĕ çул хушши ĕçлет. Йĕвдокимăн йулташ агитацине пропаганда ĕçне лайăх туса пырат. Примерăл ĕçленине кура ăна ПСС/ЛКС райкомĕ парти ретне кĕме рекомендаци панĕ. Халĕ ăна ПСК(б)П ретне илнĕ.

Йĕвдокимăн йулташ хăйĕн политикăлă пĕлӳĕхне хăпартассишĕн тăрăшат. Вăл „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" хăй тĕлĕн вĕренме тытăнчĕ.

Гер. Шчербаков.

Перепиç иртерме кадр хатĕрлеççĕ

Декабрĕн 1-мĕшĕне 3-мĕш хушшинче Шупашкарта строителсен клубĕнче 1939 çулти халăх переписине хулара иртерме çирĕплетнĕ инструктăр-контролăрсен курсне туса иртернĕ. Вăл курсран 16 çын вĕренсе тухнă. Çак куҫенчех счотчиксен курсĕ пулса иртет. Унта 20 çын вĕренмеле. Пĕтĕмпе 4 курсна хулари счотчиксене 100 çын вĕрентсе кăлармала.

Курсра пулăнсем переписе иртермели документсемпе тата переписе иртермели йĕркепе паллашаççĕ.

Трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсене вăхăтра, пахалăхлă йусамала

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Çавăпе ĕçленĕ хыççăн, трактăрсемпе йалхуçалăх машинăсене 1939 çулхи çураки вăлăн вăхăтра йусаса лартасси машинăй-трактăрăй станцисем умĕнче тăракан тĕп мăшăру пулса тăмала. Анчах, çакна епĕр Канашпа Шăхасан МТСтанцисенче курма пултарăмастпăр-ха. Икĕ МТС-че те трактăрсене йусама тытăнманнă пĕрех, йалхуçалăх машинĕсене те тирпейлесе лартман. План тăрăх кăçал Шăхасан МТС-н 48 трактăр йусамала. Çак шутран 1938 çулхи 4-мĕш квартăлта 9 трактăра тĕпренех, 13 трактăра кăшт кăна йусаса кăларнала. Ку тăранччен пурĕ те 8 трактăр çеç йусама тытăннă, вĕсенчен 5-шне йусавран кăларнă. Трактăрсене йусас ĕç кирлĕ пек пымăнни чи малтанах, МТС директорĕпе трактăрсене йусас çĕрте ĕçлекен трактăрис-рабочисен вăлăн ĕçлеме условнăсем туса паманнинчен килет. Мĕншĕн тесен ку тăранччен те мăстерскойĕнче кăмака туса пĕтермен, станоксем çитмеççĕ. Çавăн пекех трактăриссем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе кирлĕ пек туса пымăççĕ. Рабочисем хушшинчеămăртăна ĕçлекенсем, пысăк ĕç тухăçлăхĕшĕн кĕрешекенсем çук. Ĕç дисциплини çителĕксĕр. Чылай трактăриссем хăйсен трактăрсене йусаса çĕрте пулмăççĕ. Çакăн пек пĕркене пулах йалхуçалăх машинĕсене йусасси те вăрахăн пырат. Халĕ 7 комбайна йусанçи туна, анчах вĕсен моторне пĕринне те йусаман. 1 трактăр, 18 сейăлка, 15 куҫтиватăр колхоз итемĕсем пĕр уйăхрĕсенче лараççĕ.

Шăхасан райĕсĕрĕç пайĕ, уйăн пуçлăхĕ Мухин йулташ трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсене вăхăтра йусас ĕçе йĕртсе пымаст, вăл МТС ĕçĕ çинчен пĕлме те тăрăшмаст. Çавăн пекех Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ ĕçре пулăшу панине кура çук.Ситменлине тата вăл, трактăрсене йусама кирлĕ пулакан запасла пайсене туписа парасшăн та тăрăшмаст.

Трактăрсене вăхăтра йусас пулаҫ

Тутăркас машинă трактăрлă станцин 1939 çулти çураки вăлăн 53 трактăра, вăл шутран 5 трактăра тĕпренех йусамала. Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планĕ тăрăх 35 трактăра Çĕрпӳри машинă-трактăрлă мăстерскойĕнче йусамала. МТС-че ĕçлекенсем трактăрсене Çĕрпӳре илсе кайма инçе тесе, 10 трактăра çеç Çĕрпӳре йусаттарма йышăннă.

Трактăрсене йусама 4 бригадă туна. Трактăрсене йусанă çĕрте трактăриссем пулнă. Кунпа пĕрлех МТС ремонторсен кĕске курслă курсне иртерме пилăртнă. Трактăрсене йусасси çинчен трактăриссем тата трактăрсене йусанă çĕрте ĕçлекенсен хушшинче сӳтсе-явнă. Унтанпа ĕнтĕ вăхăт çук ӳйăх ытларах иртрĕ. Апла пулсан та Тутăркас машинă-трактăрлă станци трактăрсене йусас ĕçе йĕркелени пулмарĕ. Ку вăхăтчен те пĕр трактăра та йусаса кăларман. Ĕçлекенсем хушшинче дисциплинă çук. Хăшпĕр кунсенче 20 çын ĕçлес вырăнне 3—5 çын кăна ĕçлеççĕ. Рабочисем валăн ĕçлеме условисем туса паман. Ремонторсен общежитийĕ çук. Мăстерскойĕнче ĕçлеме сивĕ, çутă çук, час-часах шыв пулмаст.

Комбайнисемсĕр пуçне ытти машинăсем пурте тенĕ пекех ахаль çĕхех лараççĕ.

Тутăркасри машинă-трактăрлă станцинче трактăрсене йусас тĕлĕшпе иртнĕ çулта та начар ĕçленĕ. Çав йăнăшсем кăсал та çаплах пулса пыраççĕ, Çав йăнăшсене малашне пĕтермеле, трактăрсене график тăрăх вăхăтра тата пысăк пахалăхпа йусамала.

Пр. Иаркункин.

Трактăрсем колхозсенчех лараççĕ

Иртнĕ çулта Елĕкри машинă-трактăрлă станци трактăрсене тата ытти йалхуçалăх машинисене вăхăтра, пахалăхлă йусаман пирки, кăçалхи çураккинче, çăвнашкалах тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес, авăн çапас ĕçсенче те пысăк чăрмавсем пулчĕç. Çапла вара машинă-трактăрлă станци трактăрсемпе ĕçлемели çулталăк планне тултараймарĕ. Трактăрсемпе клевĕр çапма колхозсемпе договăрсем тунă. Анчах, колхозсемпе тунă договăрсем хут çинчех йулăççĕ. МТС машинăсем клевĕр çапас ĕçрте пачах ĕçлемен тесен те тĕрĕс пулат.

Машинă-трактăрлă станци трактăрсене тата ытти машинăсене йусас ĕçрте иртнĕ çулта пулнă йăнăсене кăçал шута илмен. Пĕлтĕрки çитменлĕхсем кăçал та пулса пыраççĕ. Трактăрсене йусама октăбрĕн 1-мĕшĕнчен тытăкмала пулнă, анчах хăв те пуçланман. Чылай трактăрсем, ытти машинăсем колхозсенчех лараççĕ. Трактăрсене йусама графикĕ туман.

МТС колхозсенчен натурплатă тырăнне пуçтарас, трактăриссемпе расчот тăвас тĕлĕшпе те начар ĕçлет.

Елĕкри машинă-трактăрлă станцин трактăрсене, йалхуçалăхăн ытти машинăсене йусама çирĕп графикĕ тумала. Çав графикăн тăрăх ĕçлесе пырас пулат.

Т. Куликов.

Куславккара васкамаççĕ

КУСЛАВККА. Машинă-трактăрлă станци трактăрсемпе тата ытти машинăсене партипе правительствăпа кăтартса паниĕ срукра йусассишĕн çине тăрса ĕçлемест. 1939 çулти январĕн пĕрремĕш тĕлне план тăрăх 18 трактăр, 30 плуг, 5 куҫтиватăр, 15 сейăлка, 5 комбайн йусаса пĕтермеле. Пайăнки кун тĕлне 17 трактăрăн кайри корпусĕсене, 9 мотор, 12 сейăлка, 2 куҫтиватăр кăна йусанă.

МТС кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе те начар ĕçлет. Трактăриссен курсне те организацинленĕ. Анчах унта халь 39 çын çеç вĕренеççĕ. Ӳйăрăм колхозсем трактăриссен курсĕнче вĕреме çынсем ăнмасăр тăраççĕ.

Мранька.

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Кайа йулса пынине пĕтермеле

Декабрĕрĕн 8-мĕшне пирĕн республикăра çĕрулми хатĕрлев планне 65,4 процент анчах тултарнă. Вăрмар, Кувакинă, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка районĕсем государствăна çĕрулми тăратас ĕнĕпне ытла та кайа йулса пыраççĕ.

Парти Чăваш Обкомĕн иккĕмĕш пленумĕ ăнтарласа государствăна умĕнче " обязательствăсене тата финанс планне мĕнле тултарса пыни çинчен сӳтсе-явăрĕ. Апла пулсан та, районсенчи партипе совет тата хатĕрлев организацийсем пленум решенийĕнчен кирлĕ вывăд тăваймарĕç, хатĕрлев ĕçĕсенче тата-кăй улшăну туни пулмарĕ.

Пленум пулса иртнĕ хыççăнхи вăхăтра Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Вăрмар тата Кувакинă районĕсенчи уполномоченăйĕсем хатĕрлев ĕçĕнче парти Обкомĕн иккĕмĕш пленум решенисене никĕсе хурса ĕçлени курăнмарĕ. Çакна иртнĕ кунсенче мĕн чухлĕ çĕрулми йăпăх хатĕрлени уçăнах вăхăтра хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Вăрмар тата Кувакинă районĕсенчи уполномоченăйĕсем хатĕрлев ĕçĕнче парти Обкомĕн иккĕмĕш пленум решенисене никĕсе хурса ĕçлени курăнмарĕ. Çакна иртнĕ кунсенче мĕн чухлĕ çĕрулми йăпăх хатĕрлени Муськав йамали плана тултарма чăрмантарат. Декабрĕрĕн 8-мĕшне Муськав хулине çĕрулми йамали плана мĕн пурĕ те 76,9 процент анчах тултарнă.

М. Андрийанăв.

Ĕç аванланчĕ

Орпашри вăтам шкулта '(Тутăркас р.) Осоавиахим организацин ĕçĕ нумай лайăхланчĕ. Организаци председателĕ Г. Григорйев йулташ Осоавиахим членĕсене оборона ĕçне йăратса вĕрентет. Халĕ вăл 8—10-мĕш классенче вĕренекенсенчен 38 çынна ПВХО нормисем пама вĕренеç ĕçе хутшăнтарчĕ. Вăл тăрăшнипех Осоавиахим членĕсем 10 километрлă поход туса иртерчĕç.

Г. Токарĕв.

Ленин тата Сталин произведенийĕсене чăвашла кăларас ĕçе лайăхлатмалла

Партире тăракан тата партипе тăман - боҫшевиксене марксизм-ленинизмăма вĕрентсе хĕçпăллантарас ĕçре Ленин тата Сталин произведенисене чăвашла кусăрса кăларни пит пысăк вырăн йышăнса тăрат.

Троцкисла-бухаринла тата буржуалă - национализла бандитсем çак ĕçре те чылай сăтăр тунă. Унăпĕр, Сталинăн „Ленинизм ыйтăвĕсем" йăтăлă кĕнекине чăвашла кусăрнине, Чăвашла кусăрнă чухне, тăшман ăдинне хуна пулнă. „Ленинизм ыйтăвĕсем" кĕнекине Сталин йулташ: пирĕн çĕршывра пролетари диктатури, тет. Кусăраканселне редакторе, вăл ыйту пирки çав кĕнекерех, Ленин мĕн каланине кăтартнă цитатăра пирĕн çĕршывра партин диктатури, тесе кусăрна. „Ленинизм ыйтăвĕсем" кĕнекине тата ытти кĕнекесене те политикă тĕлĕшĕнчен чăтма çук пысăк йăнăсемпе, сăтăр тăвас майпа кăларнă пулнă. Халь ĕнтĕ вăл кĕнекесене тепĕр хут тĕрлетсе кăларас пулат. Анчах иртнĕ икĕ çул хушшинче Ленинăн тата Сталинăн ӳйăрăм кĕнекисене чăвашла кăларма темшĕн паракрĕç.

Нойабрĕн 23-мĕш кунĕнче Вăрмар районĕнчи коммунистсен пухăвĕ: „ПСК(б)П историне" таçтан Ленинăн, Сталинăн ӳйăрăм кĕнекисене чăвашла хăвăртрах кăларма ыйтас, терĕ. Паллах, „ПСК(б)П историне" васкасă, „Чăваш Коммунĕнче" пичетлемест тухнине тĕплĕн редакцилемесĕр кăларма ăнăрамаст. Енĕ IX-мĕш сыпăкăн 5-мĕш пунктне пăхса тухăр („Чăваш Коммунĕнче" ноябрĕн 20-мĕшĕнче пичетленĕ). Унта тĕн ыйту: пирĕн çĕршывра социализăм çĕнтересси çинчен. IX-мĕш сыпăкăн 5-мĕш пунктне чăвашла кусăрнă чухне тин тĕрĕсех кусăрман вырăнсем пур. Вĕсем çаксем: ӳйăрăм сăмахсене кусăрмасăр сиктерсе хăварни, сăмаха тĕрĕс кусăрманни, тата грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕсмăр çырнисем те пур. Вĕсене пĕтĕмех тĕрлетес пулат.

„ПСК(б)П историн Кĕске курсĕ" вырăсла 10 мăйăуи екземлăрăнах çанăнса тухнă. Вырăсла ăнланакансем ăна туйăнчĕç. Анчах хăшпĕр коммунистсем „ПСК(б)П Истори" чăвашла тухăсса кĕтеççĕ. Сăмахран илес Чăрăш Çырмари пуçламăш парторганизацинче. Унта епĕр коммунистсем пилĕкĕн, анчах икĕ йулташ „ПСК(б)П историне" вырăслине илмерĕç-ха, мĕншĕн тесен вырăсла ăнланаймаççĕ, чăвашлине кĕтеççĕ.

П. Д. Данилăв.

Н. П. ОГАРЕВ

(Çуралнăранпа 125 çул тултарнă тĕле)

Талантлă поэт-революционер Николай Платонăвич Огарев çинчен кăмăла хумхантаракан асăилӳсемпе очĕркесем сахал мар çырнă. Огаревăн революцилĕ романтикăпа тулнă сăнăăхне А. И. Герцен хăйĕн „Былое и думы" йăтăлă произведенинче пит ăстан çырса кăтартнă. Ун çинчен Н. Г. Чернышевский çырнă страницăсем те хăйсен чĕрĕлĕхне пайăн кунченех çухатман.

Николай Платонăвич Огарев 1813 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче (çене стилне), Петербургри пуйăн помещчик çемйинче çуралнă, 1877 çулхи нйунен 12-мĕшĕнче, чухăнăхра, хăйне пурăнма тĕн вырăн тупăйман çын пулса, Англире вилнĕ. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне хăйĕн халăхне самодержави пусмăрĕнчен хăтарас ĕçе панă.

Николай Платонăвич ача чухнех кайăрахпа хăйĕн чи сывăх тусĕ пулса тăнă А. И. Герценпа паллашнă. Вĕсене крепăлса йĕркесене курайманни пĕрлештернĕ. Декабриссене вĕлернĕ хыççăн, вĕсен пăтăрăлăхĕне хавхаланнă Герценпа Огарев хăйсен пурнăçне самодержавине кĕрешнĕ çĕре пама туна тунă.

1830 çулта Николай Платонăвич Мускаври университета вĕренме кĕнĕ. Унта Герценпа иккĕшĕ тавра малта пыракан студентсем пĕтĕçнĕ.

1834 çулта Огаревпа Герцена „Мускавра унчухнех стройа хирĕçле сăвăсем ӳрланă çынсем" пирки пуçарнă ĕç тăрăх арăслеçĕ. Сакăр уйăх хупса усранă хыççăн Огарева Пенза кĕпĕрнине ашшĕ асăрхавăнче пурăнма, Герцена Вăтка хулине ăсатна.

Тусĕсемсĕр Огарев питех те хытă тунсăхланă. Ăна 1838 çулта тин ашшĕ именинчен Кавказа кайма ирĕк панă. Вăл унта Сĕнĕртен куçарнă декабриссемне тĕлĕпулнă. Вĕсемне тĕл пуласа калаçнисем Огарева питĕ савăнтарнă. Огарев хăй ун пирки çапла çырнă: „Вĕсем манăн кăмăла пысăк савăнăç патне çитмелех çунатлантарчĕç. Епĕ пирĕн хĕвăхур тусĕкенсемне куçа-куçăн пăхса тăтăм, епĕ вĕсен суçĕне пыратăп, епĕ вĕсен пурăçне тӳсме пулатăп".Поет Огарев Пушкинпа Рылейĕвăн политикăла сăвăвисене куласа ӳснĕ. Ун çинчен вăл хăй „К. Ф. Рылейева асăнса" йăтăлă сăвăвинче калать:

„Рылеев был -мне первым
светом...
Отец, по духу мне родной.
Твое названье в мире этом
Мне стало доблестным заветом
И путеводною звездой".

Политикăла кĕвĕсене епĕр Огаревăн малтанхи вăхăтра çырнă произведенийĕсенчех куратпăр. Кайăрахпа вĕсем татах та ытларах вăйланса пынă. „Деревенский сторож", „Кабак", „Дорога", „Изба" пек сăвăвисенче Огарев крепăлса йăлан хурăлăхлă картинене сăнласа парат. Вăл—вырăс литературинче революцилĕ-демократилĕ йухăмăн пуçламăшĕ пулса тăнă.

А. И. Герцен ыйтнипе Огарев 1856 çулта Лондăна куçат. Ун хыççăн Российăна тек тăрăнман. Инçетри йут çĕрте те Н. П. Огарев хăйĕн революцилĕ ĕçне тума пăрахман. Унăн пуçарăвĕпе тата вăл хутшăнса ĕçленипе Герцен „Колокол" йăтăлă журнал кăларма пуçланă. В. И. Ленин ку журнала рабочи пичетне пуçарса йăраккăн журнал вырăнне шутлать.

Йут çĕршывра Огарев ирĕклĕн ĕçлекен вырăс типографине йĕркелес тĕлĕшпе те Герценăн чи сывăх пулăшаканĕ пулса тăнă, вăл „Колокол" тата „Полярная звезда" валăн сăвăсемпе публицистикăлă статйасем тата революцилĕ прокламацисем çырнă.

1857 çулта Огарев хăйĕн чаплă „Предисловие к „Колоколу" йăтăлă сăвăвине çырнă, ку сăнăра вăл журналăн программине тата задачисене сăнласа çырса панă. „Колокол" журнал çинчен поет çапла çырат:

„... гудеть не перестанет,
Пока—сгулув ночные сны—
Из колыбельной тишины
Россия бодро не воспрянет
И крепко на ноги не станет".

Огарев Роҫсийăна пурнăçĕнче пулса иртнĕ политикăла событисене пĕрне те асăрхамасăр иртерсе йăман. Хресченсене крепăлса тытăкăпан „хăтарасси" çинчен хатĕрленĕ манифеса хирĕç хăйĕн прокрола „Сон" йăтăлă сăвăвине çырнă, унта патшана помещчиксем халăха суйнине тăрă шыв çине кăларнă.

Хăйĕн пурнăçĕн йулашки сулĕсенче Огарев „Искандер", „Юноше", „Напутствие", „Студент" тата ытти паха сăвăвисене çырат. кайăрахпа вĕсенчен нумайĕшĕ революцилĕ йӳрăсем пулса тăнă.

Н. П. Огаревăн пурнăçĕпе творчĕстви революцилĕ тӳрĕлĕхпе тата ренегатсене хăйăрăн куравăннине паллă пулса тăрат.

1846 çулта Герценпа Огаревăн кружокĕнче принципла ыйтусем тăрăх тавлашу пуçланă. Кружок членĕсенчен хăшпĕрисем самодержавине кĕрешессине хирĕç тăнă. Герценпа Огарев вĕсене ылханса питленĕ. Герцен çак кружок членĕ пулнă Сатин патне çырнă çыравĕнче çапла каланă: „Астăватăн-и есĕ виçĕ çул кайăла мĕн пулнине... епĕ иртнĕ вăхăтри туссем пирки тарăхса калаçнинчен есĕ тĕлĕнетĕн-и? Халĕ вăл кăмăла çук. Маншăн Кетчĕр, Корш — темле сывăх пулнă çынсен çĕрсе çитекен вилăнсем пек çеç туйăнаççĕ... Епĕр Огаревпа хамăран çулпа. унран пăрăнмасăр, 33-мĕш çулта, 43—53-мĕш çулсенче пынă пек утатпăр, çав çулпах кайăпăр 63-мĕш çулта та".

Герценăн çак çырăвĕ çинче Огарев çапла çырса хуни пур: „хамăн сӳтсявăнкĕн çырăвĕне ăйлтах килĕштетĕп. Çакăн пек теори пирки хирĕçни ахаль хирĕçӳ кăна мар, ăйлтах ӳйăрăнса кайни пулат... Кунта ĕç ӳйăм çынсем пирки пымаст, кунта ăс чăнлăхшăн çапăçмала йĕ тăшмансен ĕнне кайса ӳкмеле",—тенĕ Огарев.

Герценпа Огарев хăйсене социалиссем вырăнне шутланă. Анчах, Ленин каланă тăрăх, вĕсен вĕрентĕвĕнче „социализăмăн пĕр чĕптĕмĕ" те пулман. Çапах та вĕсем Российăри революцилĕ тата демократилĕ шухăшсен ӳсĕмĕнче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Герценпа Огарев декабриссен ĕçне малалла илсе пынă. Вĕсен ĕçĕ декабриссене малаллăн ăрусен революционерсемпе разночинецсемпе сыхăнтарса тăрат.

Патша Роҫсийăн официаллă тата либераллă суйа науки Огаревăн творчĕстви пирки пĕр сăмах та шарламан. Унăн литературăлă тата политикăлă пысăк ĕçĕсене Совет Сойузĕнче кăна кирлĕ пек хаклаç.

С. Сергейев.

Халăх массисене хирĕç тунă каварлашу

Франципе Германи декларацийĕ

Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче Парижре Франципе Германи декларацийĕ çине алă пуснă çинчен пĕтĕмĕшле епĕр. Сак документ çине алă пусма фашиска Германин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп Париже пынă, халь вăл унта малала каласусем иртерет.

Германи фашисăмĕне Франци реакцийĕ хушшинче тунă договăрăн содержанийĕ, тĕпрен илсен, çакăн пек: икĕ правительствă ви те „мирлĕ тата юрăхлĕлĕ сыхăнусем" туса пыма сăмах парăççĕ. Германине Франци хушшинчи халăхи вăхăтри чикĕсене „татăклă" чикĕсем тесе „чăплăн йышăннăççĕ", савăн пекех тата „икĕ çĕршыва та интереслĕтерекен пĕтĕм мăтусем тăрăх контакт тытма" сăмах парăççĕ. Анчах та çак йăлашки пунктра „виççĕмĕш державăсем тĕлĕшпе пуяма пултараккан уйрăм сыхăнусем" синчен каласа хушса хăварни пур.

Сапла каласа хушса хăварни ĕнтĕ çак-на пĕлтерет: Франци çине, сăмахран, фашиста Италипе тăнăçлă пулсан (пуртĕ пĕлессĕ, Германине Итали хушшинче „уйрăм" сыхăнусем пур. Германи хăйĕн йут çĕршывсене тургăта илмели планĕсене Итали пĕрле пурăнăçа кĕртсе пырат). вара Германи, çак хушса калăнине шута илсе, Итали майлă тăрса кĕрешме права пулат.

Германине Франци пĕр-пĕринне тунă договăрăн тĕп шухăшĕ мĕнпе-ха?

Центр Европăри тата Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенче хăйсен влиянине сарассишĕн Францине Германи хушшинче тăхăнах кĕрешӳ пырат. Сакăнти çĕршывсенче Франции союзниксем пулнă, унччухне Франции унти положенийĕ сиплĕ те тĕрекле пулнă. Анчах Франци правительстви, шутлăрă буржуази интересĕсене пăлăртаса тăраканскер, пурнăчен ытла хăйĕн класĕ пуç пулса тăрассине сыхласа усрасшăн тăрашат, вăл хăйĕн класăн позицийĕсене сыхласа усрас, çирĕплетес шутпа. халăх фронтне тĕмĕрсе тăкас шутпа. Франции наципе интересĕсене вĕçĕмлеç сутса пырат. Предательствă сулĕ çинче тунă ун малтанхи пысăк утăм вăл—Мӳнхенри килĕшӳ пулнă. вăл килĕшӳре Франци Чехословакине—хăйĕн йăлашки вăйлă союзникне вакласа пайлама пилдерĕ. Унăн тепĕр союзникĕ — Польша — 1934 çултан пуçласа, фашиска Германи хыççăн кайрĕ. Германи хĕспине Изуголлине Румыни те худлен-худленех „Пĕчĕк Антантăран"—Франци тĕренсе тăна „Антантăран" уйăрăласа кайрĕç. Сапла ĕнтĕ, Франци хăйĕн союзниксенĕ çухатрĕ. Çав вăхăтра Франципе хăйĕнче реакцилĕ правительствă рабочи класа хирĕç наступлени тума пуçларĕ, чрезвычайлă декретсем кăларчĕ, çак декретсене хирĕç протест тăвакан рабочисене хăварран хĕрлет. Тулашри союзниксене сухатса пĕтерсе, çĕршывра халăх шанăсене сутăнса, Франци правительстви фашисла Германине „сывăхланма пуçларĕ. Франци буржуазине агрессăран государствă пулăшнине хăй патĕнче фашисла вĕрже туса хурас шутпа. хăйĕн рабочи класне çĕмĕрсе тăкас шутпа çав агрессăр-государствăна каварлашу тăвас çук çине тăчĕ. Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче Парижре алă пусна декларацин — Франципе Германи декларацийĕ вăл — Франци реакцийĕне Германи фашисăмĕн каварлашăвĕ Франципе Германи халăхне хирĕçле тунă каварлашу пулса тăрат, урăх нимĕн те мар.

Германири йывăрăсене хирĕçле тискер погромсем пирки пĕтĕм тĕнче тарăхса сăмлăнсе тăнă вăхăтра, пĕтĕм цивилизацилĕ етемлĕх фашисла палăчсене намăсла питленĕç вăхăтра, демократлăç Франци правительстви, хăй çĕршывĕн наципе интересĕсене сийĕн кӳрсе, сак палăчпа „мирҫӳлĕ сыхăнусем" тытасси çинчен договăр тăват.

Çак договăр Германи аллисене саятса йăрат. Ана хăйĕн йут çĕршывсене туртса илес политикине малалла цĕр чăрмавсăр туса пыма ирĕк парат. анчах вăл Франципе, унăн чикки не „татăклă" чикĕсем тесе йышăнма сăмах панинсĕр пусне, урăх нимĕн те памасть.

Германи фашисăмĕ хăйĕн пĕтĕм тĕнче умĕнчи обязательствине çурса тăкнине пĕрре çеç мар кăтартса пачĕ. Сак договăрăн кунçулĕ те çавăн пекех пулнине Франции часах курса ĕненмелле пулĕ. Итали Франци территорийĕсем çине ала тăсма ĕмĕтленнине Германи пĕччĕ халех ырлат ĕнтĕ.

Çакăн пирки Англири „Ньюс кроникă" хаçат сапла çырат: „Пирĕн ыйтас пулат: Итали Франципе çурăм хыçĕнчен çĕçĕпе чикнĕ вăхăтра Германи Франципе питрен чуптăват пулсан, çак ăпăлан хакĕ мĕнле ĕнтĕ унăн?"

Фашисла Германине договăр туни вăл— Франции наципĕ интересĕсеммĕн пысăк хăрушăлăх пулса тăрат.

Франципи халăх массисем ирĕклĕ пурнăçăн, хăйĕсен тăван çĕршывĕн наципĕ тивĕçлĕхĕпĕн пĕрлĕх фронтĕ туса кĕрешĕç.

Китай беженцисене пулăшни

Беженцăсене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп комиссри пĕлтерĕ тăрăх, халăхи вăхăт тĕлне йăпонĕçсем йышăнса илнĕ районсенчен Китай сыннисем унă мĕлйун ытла тарса тухнă. Нойабĕрĕн 15-мĕшĕ тĕлне çак беженцăсенчен пурĕ 3,5 мĕлйун çынна пулăшу панă.

(ТАСС).

Литвара çĕнĕ правитĕлствă тунă

Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче тухнă хаçатсем çакăн пек пĕлтерӳ пичетлеме кăларнă: „Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре, Литва министрĕсен кабинечĕ отставкăна тухнă. Республика президенчĕ отставкăна йышăннă. Çĕнĕ кабинет тума премьер-министра—Миронаса хушнă.

Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче, 10 сехет те 30 минутра, Миронас çĕнĕ кабинет туса, ăна çирĕплетме президента тăратнă. Президент Миронас тăратнă кабинет составне çирĕплетнĕ".

Кабинетăн малтанхи составĕнче пулнă министрсенчен çаксем хăйсен вырăнĕсенчех йулнă: финанс министрĕ индрушнас, шалти ĕçсен министрĕ Леонас, çутĕç министрĕ Тонкунас тата государствă контролĕрĕ (вăлах Литва сеймни председательĕ) Шакенис. Йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма Урбшис лартнă. Оборонă министрĕ пулма Мустейкис генерала çирĕплетнĕ. Çуйăр министрĕ—Германас инженер, çĕрĕç министрĕ—Скайсгирис, йустиция министрĕ—Гудвускас пулăçсĕ. Вице премьер-министр вырăнĕнче Литван Лондăнри посолĕ Балутис пулат. Кабинетăн çĕнĕ составĕ, кивви пекех, пурнăчен ытла „таутиниккен сойузĕн" членĕсенчен (правитĕлствă партийĕ) тата правительствă майлă çынсенчен тăрат. Халăхи кабинет составне „таутиниккен сойузĕнчен" çамрăксем нумайăраххи кĕнĕ.

Политикă çинчен хушшинче министрсен кабинетне çĕнетсе уйăхтарасси: çĕршывăн тулашри политикăлă лару-тăрăвĕ йăвăрланнă май политикăлă шухăшсем улшăннинчен килнĕ, тесе йăнлантарăççĕ. (ТАСС).

Обшчинăсен палатинче Чемберлен панă ответсем

Рейтер агентствин пĕлтерĕвĕ тăрăх, обшчинăсен палатинче депутатсем ыйтнине ответлесе премьер-министр Чемберлен çапла пĕлтернĕ: Англине Итали хушшинче тунă килĕшӳ нихăш енчен те Англи хăй çине Франци тĕлĕшпе нимĕн обязательствăсене хирĕç пымасть. Килĕшӳ тăвас умĕн каласа татăлнă чухне Тунис, Корсикă, Ницца пирки йăтăрласа асăннин пулман пулсан та, ку ыйту 1936 çултан декабĕрĕн 31-мĕшĕнче нотăсем йăрса илинче татăклă пулат, унта: Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвеланăç пайĕнчи вырăнсем ĕлĕхчи пекех пулăççĕ тесе кăтартнă, тенĕ Чемберлен. (Ку нотăсене Англине Италин хушшинче тунă килĕшӳ çумне хушса хунă).

Малала Чемберлен хăй Рима кайса килме шутланнине пăрахăçа кăларма нимĕнле сăлтавсем те çукки çинчен каланă.

(ТАСС)

Рузвельт тухса калани

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен президенчĕ Рузвельт Çурçĕр Каролинăн штатĕнче сăмах тухса калланă. Вăл реакционерсем тапăнни хирĕç хăй туса иртерекен прогрессивлă ĕçсем çинчен каланă. Рузвельт, ĕçтăвком составне итлăрах реакцилĕ лидерсене суйланипе кăмăлсăр пулнă республикăлă партири прогрессивлă елемептсене асра тытса пулас, сапла каланă: реакцилĕ промышленниксемпе банкирсем хăй вăхăтĕнче президентреспубликанĕн Теодор Рузвельт туса иртерекен реформăсене те хирĕç пулчĕç, халĕ те вĕсем правитĕлствă туса иртерекен прогрессивлă ĕçсене хирĕç. Унтан хăй çине: Рузвельт „кивĕ традицисене çĕмĕрет", вăл „пуйăнниссен тăшманнĕ" тесе тапăнни çинчен асăнса, çапла каланă: епĕ — „капиталисăмлă системăна ĕненетĕп, мир политикине тытса пыратăп".

(ТАСС).

Металлиссен Париж районĕнчи пухăвĕ

Декабĕрĕн 4-мĕшĕнче Парижре, Париж районĕнчи металлиссен федерацийĕн конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференцире предприятисенчен суйласа йăнă делегатсемпе халăх фронт организацийĕн представительĕсем пулнă. Конференцире тухса калаканскем—авиации савăчĕсенчен пурĕ 40 пин работничие ĕçрен кăларса йăнă çинчен пĕлтернĕ. Пренире тухса калаканскем оборонă продукцийĕсем туса кăларас ĕçе пĕтерсе лартма хăтланнăшăн ответлăха хуçасем çине *хумала, тенĕ.*

Испани республикине пулăшни

Испанин пĕлхăвăнсем испанин республикине çимĕçсем тăратас ĕçе темĕн пекех чăрмавсем кӳме тăрăшăççĕ пулсан та, республикăна порчĕсене обшчествăлă организацисем испанине пулăшма уйăрма фондран илсе йăраккан çимĕçсем халĕ те пырăççĕ. Англире тухакан „Таймс" хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, декабĕрĕн 5-мĕшĕнче Испанин портне Америкă пăрахутчĕ пырса çитнĕ. Вăл Испанин тусĕсем тийесе йăнă çимĕçсене илсе пынă.

(ТАСС)

Доброволĕцсене чĕнсе илни

Лигă наци секретариачĕ пĕлтернĕ тăрăх. республикăлă Испани çарĕсенчен урăх çĕршыва добровольцисене чĕнсе илесси мĕнле пынине контролĕ тăвакан комиссин хăйĕн ĕçĕсене Каталони зонинче туса пĕтернĕ. Комиссри урăх çĕршыв добровольцисене фронтран пурне те кăларса пĕтернĕ, тесе пĕлтерет. Вĕсенчен пĕр пайĕ Испанирен тухса та кайнă ĕнтĕ, тепĕр пайĕ комиссри вырнаçтарма вырăнсенче хăйсене илсе кайасса кĕтсе тăрат.

Халĕ комиссри Валенçи зонинче куçнă.

(ТАСС).

Испанин Лондăнри посолĕстви пĕлтерни

Рейтер агентствин дипломатри ĕçĕсем тăрăх çыракан корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Испанин Лондăнри посолĕ Англин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Бетлер патне пынă, вăл ăна йулашки вăхăтра фашисла интервентсен авиацийĕ Испанин мирлĕ хулисем çине бомбăсем пăрахасси йышланма пуçлани çинчен каласа панă.

(ТАСС).

Парти историне вĕренекенсене пулăшма

Харьковри халăха вĕрентес ĕçĕн облăçри пайĕ çумĕнчи лектăр бюровĕ клубсенче, предприятисенче, шкулсенче философи, большевикла партин историйĕ, литературă çинчен, пĕтĕм тĕнчери мăтусем çинчен лекцисем вуласа парас ĕçе организацилеме. Октăбĕрне нойабĕрте 1 200 лекци пулнă. ПСК(б)П историне вĕренекенсене пулăшу парас шутпа 221 лекци вуласа панă. В. И. Ленинăн уйрăм произведенийĕсем çинчен пулакан лекцисене итлеме уйрăмах нумай халăх пухăнат.

* * *

Мускаври Краснăйа Пресньă районĕнчи шкулсенче учительсем 1.100 çынна йăхăн ĕçлеççĕ. Учительсем марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илме, ПСК(б)П историне вĕренме тăрăшни питĕ те пысăк. Халăхи вăхăтра райком районри шкулсенчен нумайăшĕнче учительсем валăн консультацисем организацилеме. Учительсем валăн В. И. Ленинăн „Развитие капитализма в России" йăтăлă кĕнеки çинчен, „Диалектический материализм —мировоззрение марксистско-ленинской партии" темăпа т. ыт. лекцисем вуласа панă. Учительсем валăн районри лекторий организацилемелле тунă, унта учительсем парти историйĕ тата философи тăрăх лекцисем итлемелле пуласçĕ.

(ТАСС).

Джамбул Мускавра

Казахстан халăх йăрăçĕ ордоносăц Джамбул Джабайĕв темиçе кун хушши ĕнтĕ Мускавра хăналанат. Сталинла Конституци кунĕ Джамбул Сойузсен Çурчĕн Колонийăн залĕнче утрĕнникре шкул ачисемпе тĕл пулнă, кăçхине Сталин йăнчĕне тăракан автосамăтăн кудăтурă Дворецĕнче пулнă. Акăн çинăн пекех тата театр искусствăн Государствă институтĕнчи студентсем патĕнче хăнара пулнă, ун умĕнче институтра вĕренекен казахсем выступленисем тунă.

Çак кунсенче столицăра Джамбул виçĕ чăплă произведени—„Ер йăрă йăрлатăн çап-çутă Кремлре", „Телей саккунĕ", „Сывă пултăр Сталин" йăтăлă произведенисем çырнă.

Халăх йăрăçне столицăри ĕççынисем хытă йуратаççĕ. Ун патне студентсем, шкул ачисем, учăнăйсем, красноармейĕсем пыра-пыра кайаççĕ.

(ТАСС).

„Родина" самолĕт Комсомольска вĕçсе пынă

Амур çинчи Комсомольск, декабĕрĕн 7-мĕш. „Родина" самолĕт хăй анса ларнă вырăнтан декабĕрĕн 5-мĕшĕнче вĕçсе çĕкленнĕ, çав кунах Комсомольска вĕçсе çитнĕ. Самолĕт лайăх вĕçсе çĕкленсе лайăхах анса ларнă. Материалăнăй чăссем пĕр кăлтăкскăр ĕçленĕ.

(ТАСС).

Керес тата Флор Совет Сойузне килеççĕ

Амстердамри шахмат матч-турнирĕнче çĕнтернĕ Пауль Керес—Естони чемпионĕ тата гроссмейстĕр Сало Флор декабĕр иĕçĕнче ССР Сойузне килеççĕ.

Йут çĕршывсен гроссмейстĕрĕсем Мускавра тата Ленинградра пулаççĕ, унта вĕсем совет шахматистĕсемпе выляççĕ.

(ТАСС).

Çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç

ЙĔТЕРНЕ. Районри савăтсемпе колхозсем, шкулсем, предприятисем Сталинла Конституци кунне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç.

Спиртсăвăтри стахановăнка Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Ксения Йăкимăвă йăлтăн йĕртсе пыракан сменă çак аслă уйăва çулталăкри плана 108 процент тултарнине кĕтсе илчĕ. Йĕтĕрне хулинчи Сталин йăчĕпе тăракан промертел çулталăк планне 128 процент тултарчĕ.

Районри чылай колхозсем Конституци кунне йăлхуçалăх çулне вĕçленине, пысăк тухăçла тырпула тирпейлĕ пуçтарса кĕртнине кĕтсе илчĕç. Ман Чурашри „Прогресс" колхоз йăлхуçалăх çулне вĕçлесе тупăшсене валеçме пуçларĕ. Çăвăнна пĕрлех ку колхозра çитес çуракине хатĕрленес ĕç те сарăлса пырат. Виçĕ бригада плугсене йуса пĕтернĕ. Сталинла Конституцине йышăнăнранпа икĕ çул тултарăл йăтпа пулса иртнĕ чаплă пухура лайăх тăрăшса ĕçлесе пынă колхозниксемпе колхозницăсем 64 çынна премисем панă.

Ник. Цветков.

Аслă Сталин йăчĕпе çапăçрăмăр

Ман Иекĕт йăлне (Йĕтĕрне р.) çак кунсенче Ҫасан кӳлли районĕнчи çапăçура пулнă красноармеец Йермолайĕв йăлтăн тавăрăнчĕ. Ана йăлти колхозниксемпе колхозницăсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Йермолайĕв йăлтăн колхозниксене Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусем çинчен каласа панă.

— Епĕр çапăçăва пысăк хăвассăпа кĕтĕмĕр. Мĕншĕн тесен пирĕнтен кашнийĕх мĕншĕн çапăçнине лайăх пĕлсе тăнă. „Аслă Сталинăшăн!", „Тăван çĕршывăшăн!" тесе пурте пĕр çын пек çапăçăва тухрăмăр. Çапла епĕр аслă Сталин йăчĕпе тăшмана совет çĕршывĕ çинчен йăлтах тасатрăмăр, тет Йермолайĕв йăлтăн.

Т. Ҫăрăмăлăхăни.

Ҫеҫпĕл сăввисене пăсма кам ирĕк панă?

Чăвашиздат кăларнă «Сăвăсем» йăтăлă (сборник пирки «Самрăк большевик» хаçатра М. Йеник, «Чăваш Коммунĕ» хаçатра Л. Агакăв тухса калаçрĕç. Сборникри çитменлĕхсем пурри çинчен нимĕн те калаймарĕç. Ҫеҫпĕл Мишши начар çырнă тесшĕн мар епĕр—йăлтах тепĕр майлă, вăл питĕ те лайăх сăвăсем çырнă. Ҫеҫпĕл—чăваш поезийĕн чи пултарулă мăстăрĕ, Ҫеҫпĕл—лирик. Чăваш поечĕсем Ҫеҫпĕл çырнисенчен нумай вĕренеççĕ,—тесе вĕрентетпĕр епĕр шкул ачисене.

Анчах, çак чăваш поезийĕн чи пултарулă мăстăрĕ Ҫеҫпĕл Мишши сăвăсене «Сăвăсем» сборникне пăсма тăвăлнаскер пире, Ҫеҫпĕлĕн сăвăсене пĕр пăхмасăр калама пĕлекенсене, калама çук тĕлĕнтерчĕ, кӳрентерчĕ. Сборнике кĕнĕ «Пурнăçпа вилĕм» йăтăлă сăвăран вĕсем 22 йĕрке калăрса пăхатнă, «Чăваш хĕрарăмне» йăтăлă сăвăран 8 йĕрке, «Епĕ вилсен» йăтăлă сăвăран 12 йĕрке калăрса пăрахнă. Вулакансенчен мăшкăласа пулмасăр-ши ку? Талантлă поет Ҫеҫпĕл сăвăсене хăй мĕнле çырса хăварнă çаплипех вуласăн епĕр. Унăн сăвăсене çĕнĕрен «Лусаса» пăсма никама та ирĕк памала мар.

Ф. Меценатăв.

Канашри педучилищĕ.

Шашкă турнирĕ

Качалавр и (Елĕк р.) «Труд» колхозра шашкă турнирĕ пуласа иртрĕ. Унта 14 колхозник вылярĕç. Турнирта Евстафий Кузнецов 12,5 очко выласа илсе пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Иккĕмĕш вырăнта Гер. Кузнецов (9,5 очко), виççĕмĕш вырăнта 60 çулхи колхозник П. Быкăв (9 очко).

Колхоз правленийĕ пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăна тухнисене премисем панă.

А. Борисăв.

Концерт пачĕç

Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче Чăвашсен пĕрремĕш колхоз театрĕ Тутаркас районĕнчи Чемей йăлне пырса концерт лартса пачĕ. Концерт курма 400 çын ытла пухăннă. Артистсем концерта пысăк мастăрлăха иртерчĕç.

Н. Николайĕв.

Ответлă редактăр Н. М. ҪЕМЕНАВ.

Шупашкар пуăницине
хуçалăх ĕçĕнчи опытлă работник
тата
КУЧĔРСЕМ КИРЛĔ.

ЧĂВАШАВТОГУЖТРЕСТА
Шупашкарта йăлăнлăха ĕçлеме
ВОЗЧИКИСЕМ,
Канаш хулинче ĕçлеме
аслă бухгалтĕр тата
икĕ бухгалтĕр кирлĕ.
Ĕçуçăн—килĕшӳ тăрăх. Хватер паракçĕ.
Ыйтса пĕлмели адрăс:
Шупашкар хулинче: ул. Союзная, 4, Чăвашавтогужтрест. Канаш хулинче: Канашское отделение Чувашавтогужтреста.

ХАÇАТ-ЖУРНАЛСЕНЕ
1939 ÇУЛШĂН ÇЫРĂНТАРМА ПУÇЛАНĂ

Республикăра тухса тăракан хаçатсемпе журналсене мĕн чухлĕ кирлĕ таран çырăнма пулат.

Хаçатсемпе журналсен йăчĕсем	Мĕнле чĕлхепе тухат	Çырăнса илмели хакĕ			
		1 уйăха	3 уйăха	6 уйăха	Çулталăка
Хаçатсем:					
„Красная Чувашия"	Вырăсла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Чăваш Коммунĕ"	Чăвашла	2—50	7—50	15—00	30—00
„Самрăк большевик"	„	60	1—80	3—60	7—20
„Пионер сасси"	Чăвашла тата вырăсла	25	75	1—50	3—00
„Стахановăла хăвартлăхăн"	Чăвашла тата вырăсла	50	1—50	3—00	6—00
Журналсем:					
„Ленин çулĕпе"	Чăвашла	1—00	3—00	6—00	12—00
„Ĕçĕрăвăл"	„	50	1—50	3—00	6—00
„Сунтал"	„	1—00	3—00	6—00	12—00
„Капкăн"	„	40	1—20	2—40	4—80
„Хатĕр пул"	„	30	90	1—80	3—60

ПОДПИСКĂНА сойузпичет, почтă, почтальонсем, хаçат çырăнассине организацилекенсем, предприятисенчи, учрежденисенчи, МТС-енчи, совхозсенчи тата колхозсенчи пичет сарăкан ответлă çынсем ирĕççĕ.

Шупашкарта хаçатсемпе журналсене кашни уйăхăн 29-мĕш числиччен, районсенче 27-мĕш числаччен çырăнма пулат.

ПОДПИСКĂНА ÇАК АДРĔСПА ĂЙМАЛА: Город Чебоксары, ЧАССР, Дом связи, подписная контора „Союзпечать".

Сыхăну управленийĕн „Союзпичечĕ".

„Сойузкинопрокатăн" Чăваш республикăнчи уйрăмĕ
„ВЕЛИКОЕ ЗАРЕВО"
йăтăлă историлĕ-революцилĕ, художествăлă, сасăлă çĕнĕ фильм илнĕ, ăна Чăваш республикăнчи экрансем çине кăларать.
ТБИЛИСИРИ КИНОСТУДИ ПРОИЗВОДСТВИ, 1938 ÇУЛ.
Сценарийĕ Г. Цагарелине М. Чиаурелин. Режиссăр—орденоносĕн СССР Верховнăй Совет депутачĕ М. Чиаурели. Асăлă операторăр А. Дигмелăв. Операторăр А. Полиниевич. Звукооператорăр В. Долидзе. Композиторăр И. Гониели. Художник Ш. Мамаладзе. Ассистентсем М. Тархнишвили тата Ш. Гедеванишвили. Звукооформленине В. Доленко тунă.
Исполнителсем: В. И. Ленин ролĕне артист К. Мӳфке. И. В. Сталин ролĕне артист М, Геловани.
Фильма выляççĕ: артист-орденоносĕн С. Багашвили, арт.-орденоносĕн А. Жержолиани, Республикăн. халăх арт. И. Чхеидзе. Артистсем Т. Макарава. Артист В. Матов. Артист Д. Иванов. Артист И. Перестиани. Артист М. Чахлазде тата ытти артистсем те.
Фильм—çирĕм çул маларах пирĕн Сойузри наципе республикăсенчи халăхсем вырăс рабочийĕсемпе тата хресченĕсемпе тачăн тусăл пулăпа çĕнĕ, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçăн мĕнле кĕрешни çинчен каласа парать.
Картинăра—Октăбĕр кунĕсем умĕн большевика парти йĕртсе пынине капиталиссемпе помещиксенпе хирĕç пынă кĕрешӳре ССР Сойузĕнчи халăхсен аслă тăванлăхĕ йепле пиçĕхсе, тĕреклĕнсе тата вăйланса пынине кăтартнă. „Великое зарево" фильма етемлĕхĕн аслăран та аслă сулупуçĕсен—Ленинпа Сталин йăлтăшсен сăнарĕсене ӳкерсе кăтартнă.
„Великое зарево" фильма декабрĕн 10-мĕшĕнче пуçласа кашни кунах Шупашкарти Строителсен клубĕне кăтартаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 848
Гор. Чебоксары, типография № 1 Мостпрома ЧАССР, заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.